2. **«Çамрăкла вĕренни – чул çинче» калав тăрăх хатĕрленĕ инсценировка**

**Вылякансем:** Аслашшĕ, мăнукĕ

**1-мĕш курăну**

Ĕçсем пĕр килте пулса иртеççĕ. Шкула каймалли вăхăт çитнĕ. Ватă çыннăн мăнукĕ кăçал пĕрремĕш хутчен шкула кайнă. Вăл кашни ирех шкула вĕçтерет.

Ирхине. Аслашшĕ пӳртре кăштăртатса çӳрет. Мăнукĕ çывăрать.

**Аслашшĕ:** Мăнукăм, вăран, шкула кайма вăхăт. Тăрса юлатăн.

Мăнукĕ ăшă вырăн çинчен тăрасшăн мар. Вăл йăшăлтаткаласа илет. Юлашкинчен вăранать, тăрать, кăштах хул-çурăма хускаткаласа илет.

**Мăнукĕ:** Асатте, паян эпир ă сас палли вĕренетпĕр. Ĕнер а сас палли вĕреннĕ. А-

Автан тус, автан тус,

Мĕншĕн хытă авăтатăн.

Мана ыйхăран вăрататăн?

**Аслашшĕ:** Маттур, мăнукăм! Ак киле килсен мана та вĕрентĕн-ха вулама. Эпĕ вĕт вулама вĕренеймен. Пирĕн пурнаçĕ раснарах пулнă.

**Мăнукĕ:** Юрать, асатте. Шкултан килсен вулама вĕрентĕп эпĕ сана.

(Мăнукĕ хыпаланса тумланать те шкула тухса чупать. Аслашшĕ алă сулса ăсатса ярать)

**2-мĕш курăну**

Çав пӳртех. Аслашшĕ пӳртре кăштăртатса çӳрет. Чӳречерен пырса пăхать, мăнукне кĕтет. Кĕç алăк уçăлать те мăнукĕ кĕрсе тăрать. Вăл шкултан таврăннă. Васкаса хывăнать, аслашшĕне пырса ыталать.

**Мăнукĕ:** Асатте, паян эпир Ă сас палли вĕрентĕмĕр. Акă кур (кĕнекине сумкăран кăларса ă сас палли патĕнче чарăнать. Сыпăкăн-сыпăкăн аслашшĕне вуласа парать.)

**Аслашшĕ:** Мăнукăм, ытла васкаса ан вула-ха, эпĕ ас туса юлаймастăп.

**Мăнукĕ:** Э, асатте, ку вĕт питĕ çăмăл. Пире учитель паян çеç кăтартрĕ ку сас паллине, эпĕ вара вĕренсе çитрĕм те (Ача кĕнекери текста такăнмасăр вуласа парать. Хăй питĕ савăнăçлă. Унтан аслашшĕ вулама хăтланать, анчах унăн пулсах пĕтмест)

**Аслашшĕ:** Мăнукăм, ку мĕнле сас палли тата? ( Кĕнекери сас паллине мăнукне кăтартать)

**Мăнукĕ:** Асатте, ку ĕнерхи А. Ку вара – паянхи Ă сас палли (Аслашшĕ вулама пуçлать)

**Аслашшĕ: (вулать)** А-а-ма-н, аман

**Мăнукĕ:** Аман мар, асатте, ăман

**Аслашшĕ:** Çапла пуль ара.

**Мăнукĕ:** Асатте, мĕнле-ха капла, эпĕ санран пĕчĕккĕ пулсан та вулама кăна мар, çырма та пĕлетĕп, эсĕ вара халĕ те вулама та вĕренсе çитеймерĕн.

**Аслашшĕ:** Эх, ачам, ахальтен мар-çке çамрăкла вĕренмесен ватăлсан вĕренме хĕн тесе каланă. Йывăр çав, мăнукăм, ват çынна вĕренме, пит йывăр, мĕн вĕреннине мансах пыратăн. Чăн иккен: çамрăкла вĕренни – чул çинче, ватăлла вĕренни – юр çинче.

**Мăнукĕ:** (аслашшĕ çумнерех куçса ларать) Мĕне пĕлтерет ку, асатте?

**Аслашшĕ:(** мăнукне пуçран ачашласа илет те) Ача  чух тăрăшса вĕренмеллине пĕлтерет ку, ачам. Юра çил те вĕçтерет, сар хĕвел те ирĕлтерет, чул çĕр çул хушши те тĕрĕс-тĕкелех выртать.

**Чаршав хупăнать**